27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
30
ШАМАТКУН
193(6688) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

КОЛХОЗĂН ВĂРЛĂХ ФОНЧĔ

Колхозăн пурнăçне ĕçсен тĕп законĕ вăл — ялхуçалăх артелĕн уставĕ пулса тăрать. Колхоз хăйĕн пурнăçне, хăйĕн куллехи ĕçне мĕнле йĕркелемелли пĕтĕмпех ялхуçалăх артелĕн уставĕнче кăтартса панă. Çав устава тĕрĕс, пĕр пăрăнмасăр пурнăçа кĕртни çĕрте пĕтĕм колхоз ĕçĕ те, колхозниксен пурнăçĕ те лайăхланса пырассĕ. Вăл тĕп закона пăсса ĕçлекен колхоз вара нихăçан та большевиклă колхоз, малта пулмалли колхоз пулма пултараймасть. Колхоза ертсе пыракан çынсен кашни кун, кашни сехетре устав страницисене уç-уç пăхмалла, мĕнле тесен унта ытти ĕçсем хушшинче колхоз умĕнче тăракан задачăсем çинчен, вĕсене мĕнле пурнăçа кĕртмелли çинчен тĕплĕн те уçăмлăн кăтартса панине тупма пултаратпăр.

Халĕ колхозсенче тырпулне пухса кĕртес, государствăна тырă парас тата колхозниксене вăрлăх фончĕсене хывса хăварас ĕçсем пыраççĕ. Мĕн калать-ха уставра çак ĕçсем пирки? Акă мĕн калать устав:

«Пухса илнĕ тырпула тата вылăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăша артель çакăн пек тăрать:

а) государствăна тырă памалли тата кивçен илнĕ вăрлăха тавăрса памалли обязательствăсене пурнăçлать, МТС-па тунă договор тăрăх, МТС ĕçĕсемшĕн натуроплатăпа тӳлесе татать тата контрактаци договорĕсене тултарать;

б) акма вăрлăх хывать тата вылăх-чĕрлĕхе çулталăк хушши çитермелĕх тырă хывса хăварать, çавăн пекех тата тырпул пулмасан, вылăх-чĕрлĕх апачĕ пулмасан ыхланма вăрлăх тата вылăх-чĕрлĕх апачĕ илмелли тивме юраман фонд тăвать; çак фондсене çулталăк валли кирлĕ хисепĕн 10—15 процентĕ чухлĕ хăвараççĕ те кашни çулах çĕнетсе тăраççĕ;

в) артелĕн пĕрлешӳллĕ пухăвĕ йышăннипе, инвалидсене, ватă çынсене, вăхăтлăха ĕçлеме пултараймасăр çынсене, красноармеецсен çемйисене пулăшма, ача яслисене тата тăлăх ачасене усрама пулăшу фончĕсене тăвать; çав фондсене пĕтĕм пухса илнĕ продукцин 2 процентĕнчен ытла мар хывмалла;

г) артель членĕсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ кăтартса панă тăрăх, государствăна е пасарта сутма тырă уйăрса хăварать;

д) хăйĕн ытти мĕнпур тырпулне тата вылăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăшне артель хăйĕн членĕсем хушшинче ĕçкунĕсем тăрăх валеçет».

Çапла калать ялхуçалăх артелĕн уставĕнче колхоз тырпулне валеçмелли йĕркесем çинчен. Çак йĕркесем çинчен вăл калаçнă-ха, мĕнле выводсем тумалла вĕсенчен колхозниксемпе вĕсене ертсе пыракан юлташсен? Пĕррĕмĕш вывод: колхозăн чи пирвайхи тата чи хисеплĕ задачи вăл — государствăна тырă памалли тата кивçен илнĕ вăрлăха тавăрса памалли обязательствăсене пурнăçа кĕртесси, МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлесе татасси тата контрактаци договорĕсене пурнăçласси. Çак задачăна пурнăçа кĕртнĕ хыççăн кăна колхоз хăйĕн фончĕсене хывас тата колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçсе парас ĕçе тытăнма пултарать. Апла пулсан, колхоз государствăна тырă парас тата натуроплата тӳлес ĕçсене мĕн чухлĕ хăвăртрах туса ирттерет, вăл колхозниксене те çавăн чухлĕ хăвăртрах тырă валеçсе пама пултарать. Иккĕмĕш вывод: государствăна памалли тата тĕрлĕ фондсене хывмалли тырă хисепĕ, акакан çĕр лаптăкĕ улшăнмасть пулсан, кашни çулах пĕр пек пулать, вăл тырă мĕнле пулнине кура улшăнса тăмасть. Колхозăн тырă лайăх пулсан та, начар пулсан та, государствăна унăн пурпĕрех пĕр хисеп чухлĕ тырă памалла. Апла пулсан вара, колхоз мĕн чухлĕ вăйлăрах тырпул туса илет, унăн колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама тырă çавăн чухлĕ нумайрах пулать. Çавăнпа та вăйлă тырпулшăн кĕрешес задача çинчен кĕркунне те, хĕлле те, çуркунне те, çулла та,—яланах асра тытмалла, мĕншĕн тесен колхозниксем ĕçкунĕ пуçне ытларах тырă илесси вăлтах çак пĕрремĕш задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртнинчен килет.

Çапла туни хушать ялхуçалăх артелĕн уставĕ, çакăн пек задача тăрать ялхуçалăхĕн работникĕсем умĕнче.

Пирĕн республикăри çĕршер колхоз государство умĕнчи хăйсен пĕрремĕш тивĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Вăрнарпа Шупашкар районĕсенчи колхозсем государствăна обязательствăсем тăрăх тырă парса татрĕç. [illegible]

[illegible] сенче çук та пулĕ, анчах çакна пурнăçа кĕртмен çынсем чылай тĕл пулаççĕ мĕн. Сăмахран, Элĕк районĕнчи «Сталинит», «Новый путь», «Серп и молот», Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче çак йĕркене пăсни çинчен эпир «Чăваш Коммуни» хаçатра çырса пĕлтернĕччĕ. Çав колхозсенче вăрлăххăх уйăрнă участоксенчен вырса кĕртнĕ тырăсене ытти тырăсемпе пĕрлех çапаççĕ, вĕсене уйрăм амбара хумаççĕ. Çак районри Татмăшри Молотов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăх участокĕнчи тырă ăçта кайнине те пĕлмеççĕ. Ку çеç те мар-ха, хăшпĕр колхозсенче, вăрлăх участокĕсенчи тырра уйрăмăн пухса илнĕ пулсан та, ăна кирлĕ-кирлĕ мар çĕре салатаççĕ: «Первое мая» тата «Комбайн» колхозсенче вăрлăххăх пухса илнĕ тырра пĕрлешӳллĕ столовăя панă е колхозниксене аванс шучĕпе валеçсе панă. ВКП(б) Элĕк райкомĕпе райисполкомĕ çак çитменлĕхсем çинчен чылайранпа пĕлеççĕ ĕнтĕ, анчах вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнни палăрсах каймасть-ха.

Паха вăрлăх — вăйлă тырпулăн никĕсĕ. Мĕнле вăрлăх акатăн, çавăн пек тырă илетĕн, тет халăх сăмахĕ. Çакна асра тытса, колхозсен халĕ хăйсем уйрăм участоксенче ятарласа пăхса ӳстернĕ чи паха тырра вăрлăх фондне хывса хăвармалла. Килес çул акана тухсан, республикăра вăрлăхсăр колхозсем ан пулччăр, кашни колхозăн хăйĕн кирлĕ чухлĕ тата паха вăрлăх пултăр.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Артиллери генерал-полковникне М. Н. Чистякова çар званийĕ—артиллери Маршалĕ ятне парасси çинчен

Артиллери генерал-полковникне Михаил Николаевич Чистякова çар званийĕ — артиллери Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Авиаци генерал-полковникне С. Ф. Жаворонкова çар званийĕ—авиаци Маршалĕ ятне парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Семĕн Федорович Жаворонкова çар званийĕ — авиаци Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕ.

Юлашки сехетре илнĕ çĕнĕ хыпарсем

Белград çывăхĕнчи çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци паян çапла пĕлтерчĕ: Югославири партизансен соединенийĕсем хальхи вăхăтра Югослави столици—Белград хули çывăхĕнче çапăçаççĕ. Белград патнелле çывăхарса пынă чухне партизансем нимĕçсемпе четниксен соединенине аркатса тăкнă. Белградра хăйĕнче фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем партизансене пулăшаççĕ.

Аслă Октябрь уявне колхоз уйхирĕнче чаплă çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илер!

КОЛХОЗНИКСЕМ АСЛĂ УЯВА ÇИТĔНӲСЕМПЕ КĔТСЕ ИЛМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

КАЛИНИНО, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту колхозсенче те сарăлса пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуçалăх работникĕсем аслă праçнике ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе уявлама хатĕрлеççĕ.

Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Авăн çапнă çĕрте ĕçлекен молотилкăсем пурте нормăна ирттерсе тултарса пычĕç. Çапла, 6 лашапа ĕçлекен икĕ молотилка куллен 50-шар центнер тырă çапас вырăнне 70-шер центнер çапнă. Молотилкăсене лайăх ĕçлеттерессишĕн машиновед Е. Остряков юлташ тимлĕн тăрăшрĕ.

Колхозниксем çĕрулми кăларнă çĕрте те стахановла ĕçлерĕç. Архипова, Гладкова, Степанова юлташсем кулленхи нормăна 180 процент таран тултарса пычĕç. Çакна пула колхоз çĕрулмине кĕске срокрах кăларса пĕтерчĕ.

Государствăна тĕштырă тата çĕрулми памалли плана колхоз пĕтĕмпех тултарса çитерчĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

Кĕрхи çĕртме тăвассине иккĕмĕш черетри ĕç вырăнне хураççĕ

МУРКАШ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем халĕ те кĕрхи çĕртме тума васкамаççĕ-ха. Ку таранччен çак ĕçĕн планне пĕр колхоз та тултарман. Унтан та ытларах, хăшпĕр колхозсем çĕртме тума тытăнман та. Шурча ялсоветĕнчи «Танк» (председателĕ Васильев юлташ), Муркаш ялсоветĕнчи «Знамя труда» (председателĕ Иванов) колхозсенче кĕрхи çĕртме тума шутламаççĕ пулас. «Знамя труда» колхозăн график тăрăх кĕрхи çĕртме ку таранччен 116 гектар сухаламаллаччĕ. Çак ĕçе колхоз çăмăллăнах пурнăçа кĕртме пултарнă. Колхозра виçĕ бригада. Кашни бригадăра кĕрхи çĕртме çине пĕр лаша куçарнă пулсан та, 116 гектар ытларах сухалама май пулнă. Анчах колхоз руководителĕсем кĕрхи çĕртме тăвассине иккĕмĕш черетри ĕç вырăнне хураççĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ Оньков юлташ) туртăм вăйĕ çителĕклĕ. Колхоз тырă парса татнă хыççăн лашасем пушаннă. Çапах унта кĕрхи çĕртме сухине пурĕ те 2 гектар çеç тунă.

Т. ИВАНОВ.

Ӳкерчĕк çинче: Чурачăк районĕнчи «Победа» колхозăн председателĕ С. И. Ильин юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ, государствăна тырă пĕтĕмпех парса татнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Канаш районĕ тăрăх:

36. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Яраншкин юлташ, пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ Седова юлташ). Колхоз 355 гектар çинчи тырра вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсем акмалли плана кĕске срокра 107 процент тултарнă. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 300 центнер парса хунă.

37. Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Иванов юлташ, парти кандидачĕсен группин парторгĕ Якимов юлташ). Ку колхоз 602 гектар çинчи тырра вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсем акмалли государство планне 115 процент тултарнă. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 500 центнер парса хунă.

38. «Канаш» колхоз (председателĕ Якимов юлташ, пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ Гаврилов юлташ). Çак колхоз 472 гектар çинчи тырра вăхăтра вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсем акмалли государство планне чи лайăх вăхăтра 105 процент тултарнă. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 300 центнер парса хунă.

39. «Чуваш ЦИК» колхоз (председателĕ Федотов юлташ, пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ Владимирова юлташ). Колхоз 175 гектар çинчи тырра вăхăтра вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсем акмалли государство планне чи лайăх вăхăтра 107 процент тултарнă. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 100 центнер парса хунă.

40. «Соревнование» колхоз (председателĕ Леонтьев юлташ). Колхоз 275 гектар çинчи тырра вăхăтра вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсем акмалли государство планне 108 процент тултарнă. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 200 центнер парса хунă.

41. «Молния» колхоз (председателĕ Андреев юлташ). Ку колхоз тырăсене вăхăтра вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсене кĕске срокра акса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

42. Буденный ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Анисимова юлташ). Колхоз тырăсене вăхăтра вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă. Государствăна тырă парса татнă.

40 колхоз кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ

СЕНТЕРВАРРИ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе нумай хăвăртлатрĕç. Паянхи кун тĕлне районри 55 колхозран 40-шĕ кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕç. Чылай колхозсенче кĕлте турттарас ĕçре вăкăрсемпе лайăх усă кураççĕ. Сăмахран, «Октябрь» колхозра 6 вăкăрпа кĕлте турттарчĕç.

Халĕ колхозсем кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. 5 колхоз авăн çапса пĕтерчĕç. Паянхи кун тĕлне 6596 гектар çинчи тырра çапса пуçтарнă, çакă вăл, 65 процент ытларах пулать.

Районри пур колхозсем те обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парса татрĕç, халĕ 1945 çулшăн аванс шучĕпе тырă параççĕ.

А. МИТРОФАНОВА,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Федоровăн яланхи „йĕрки"

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессишĕн халĕ колхозниксем çĕрĕн-кунĕн ĕçлеççĕ.

«Чамыш» колхоз çĕрулми кăларса пĕтерчĕ, государствăна та парса татрĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕлте кӳрсе пĕтернĕ. Ку ĕçре ĕнесемпе тата вăкăрсемпе туллин усă курнă. Государствăна тырă парса татнă, 1945 çулшăн та 150 пăт панă. Халĕ кĕрхи çĕртме тăвас тата авăн çапас ĕçсем хĕрӳллĕн пыраççĕ.

«Красное Сормово» колхозра та ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Кунта 250 гектар кĕрхи çĕртме тумалла, паянхи куна 115 гектар сухаланă. Кĕрхи çĕртмере кашни кунах 16 лаша ĕçлет. Графика ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пĕтĕм районĕпе те начарах пымасть, паянхи кун тĕлне 4000 гектар ытла сухаланă, вăл пĕтĕм планран 70 процент ытла пулать.

Анчах, çакăнпа пĕрлех, кĕрхи çĕртме тума тытăнман колхозсем те пур-ха. Акă Типçырма ялсоветĕнчи Димитров ячĕпе тăракан колхозах илер. Кунта колхоз председателĕ Федоров юлташ: туртăм вăйĕ çитменнине пула çĕртме тума тытăнаймарăмăр, тесе сӳпĕлетет, çав вăхăтрах колхозра майракаллă шултăра вылăхсемпе пачах усă курмаççĕ.

Федоров шухăшĕпе вара ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене туса пĕтерсен кăна кĕрхи çĕртме тума тытăнмалла иккен. Çак шухăш тĕрĕс маррине кашни колхозникех пĕлет, анчах та Федоровшăн вăл вара яланхи йĕрке пулса тăнă.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

ПРОКОПЬЕВ БРИГАДИ ПЕК ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри çамрăксемпе комсомолецсен бригади (бригадирĕ С. Прокопьев юлташ) кăçал ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать. Çак бригада çулталăкри плана паянхи кун тĕлне 150 процент тултарчĕ. Бригадăра плана ирттерсе тултарман пĕр тракторист та çук. Нина Соловьева трактористка плана 190 процент, унпа улшăнса ĕçлекен трактористка Вера Герасимова (вĕсем иккĕшĕ те комсомолкăсем) 174 процент тултарчĕç. Бригада сухаланă вăхăтра кăна 570 килограмм горючи перекетлерĕ.

Хĕрарăмсен бригади те лайăх ĕçлет. Ванюшкина юлташ çак бригадăна пĕлсе ертсе пырать. Бригада тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне паянхи кун тĕлне ытлашшипех тултарчĕ. Трактористка Е. Долгова юлташ хăйĕн планне 120 процент ытла тултарнă.

Çак кунсенче 8 трактора кĕрхи çĕртме тума уйăртăмăр. Ку ĕçре те трактористсем паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Сăмахран, Г. Женакин юлташăн план тăрăх 100 гектар сухаламалла, вăл паянхи кун тĕлне 120 гектар сухаланă та ĕнтĕ. Çулталăкра тумалли ĕçе эпир кĕçех пĕтĕмпех туса çитеретпĕр. МТС-ри чи лайăх трактористсене — Н. Соловьева, В. Герасимова, Афанасьев юлташсене Пăрачкав МТС-не пулăшма ятăмăр. Халĕ пĕтĕм вăя çĕртме тăвас тата авăн çапас ĕçе хуратпăр.

В. АЛЕКСЕЕВ,
МТС директорĕ.

Кĕрхи çĕртмере нормăна 125 процент тултарать

МУРКАШ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Ярапайкассинчи «Автогигант» колхоз членĕсем, фронтран килекен савăнăçлă хыпарсемпе хавхаланса, кăнтăрла та, çĕрле те ывăнма кĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Кунта кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ, авăн çапасси ăнăçлă пырать. Ялта çак ĕçе хутшăнман пĕр колхозник те çук. Ю. Трофимова ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Анчах вăл яланах итемре, ытти колхозниксемпе пĕрле. Вăл кулленхи нормăна ытлашшипех тултарать. Колхозăн ĕç планĕ тăрăх паянхи кун тĕлне 40 гектар çинчи тырра çапмалла, кунта 50 гектар çинчи тырра çапнă. Колхоз кĕрхи çĕртме тумалли графика та ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлекен Г. Михайлов икĕ касăллă плугпа пĕр гектар сухалас вырăнне кашни кунах 1,25 гектар сухалать. Çак кунсенчех колхоз кĕрхи çĕртме туса пĕтерет.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Ӳкерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи «Красный танк» колхозăн председателĕ Молаев юлташ. Вăл Отечественнăй аслă вăрçăран таврăнсанах колхоза ертсе пыма тытăннă. Колхоз тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртнĕ. Государствăна тырă парса татнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПЯРНУ (ПЕРНОВ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре Эстон нин хĕвеланăç çыранне тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса пĕтнĕ ушкăнĕсенчен тасатнă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПАГАЗИ, ЛИХУЛА, МАТСКЮЛА, ВИРТСУ, МУРИСТЕ, ХЭЛЬМКЮЛА, КУЛЛИ, ТЫСТАМА, САРВИ, САУЛЕПА ятлă пысăк ялсем тата ЛИХУЛА, КАРУЗЕ, ВИРТСУ ятлă чугун çул станцийĕсем.

РИГА хули енче пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГАРШМУЛГЖА, БИРЗКАЛНС, ЛЕДУРГА, ЛОДЕ, КРАЛЛИС, ИНИИЕМС, ДОБЕС ятлă пысăк ялсем.

САНОК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешсе, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛУПКУВ, ЗУБЕНЬСКО, СОЛИНКА, БУКОВЕЦ, ТУРЕЧКИ, БОРЫНЯ, ЯБЛОНУВ, ЗАВАДКА ятлă пысăк ялсем тата ВОЛЯ, МИХОЛА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Рига хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Рига заливĕ хĕрри тăрăх наступлени туса пыракан стрелковăй чаçсем нимĕçсене Гаршмулгжа тата Бирзкалнс ятлă вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕсенчен хĕссе кăларнă.

Псков хулипе Рига хули хушшинчи шоссе çулĕнчен çурçĕртерехре наступлени туса пыракан çарсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн инженери чăрмавĕсене çĕмĕре-çĕмĕре, 10 километр малалла кайнă. Пирĕн чаçсем пырапыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем кĕперсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ, çулсем çине минăсем лартса хăвараççĕ, вăрманти çулсем çине йывăçсем купалакупала хăвараççĕ. Совет пехоти, тăшмана хыççăнах хăваласа пырса тата ăна çав вăхăтрах аякран кайса çавăра-çавăра илсе, нимĕçсене сасартăк пыра-пыра çапать. Плотицин лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсем çĕрле вăрмансем витĕр тата шурлăхсем хушшипе кайнă та тăшман тылне тухнă, çав тери хăвăрт атакăласа, тăшманăн хирĕç тăмалли паха узелне туртса илнĕ. Сергеев лейтенант командир пулса ертсе пыракан танксен ушкăнĕ тăшман пехотин батальонне атакăланă. Танкистсем гитлеровецсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă. Романовский лейтенант танкĕн экипажĕ вăрманпа пырса тăшман çулйĕрĕсем çине тухнă та, 5 тупă, темиçе автомашина тата пĕр ушкăн нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем уйрăм участоксенче тăшман оборонине саваланса кĕнĕ. Кун каçиччен 800 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсем патне пырса тухнă. Ку позицисен пĕр вĕçĕ Рига заливне пырса тăрăнать, тепĕр вĕçĕ Хĕвеланăç Двина шывĕ патне çитет. Тĕп енсенче нимĕçсем тимĕрпе бетонран дотсем туса тултарнă тата броньăланă калпаксем лартса тултарнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманпа çак оборона позицийĕсенче çапăçма пуçланă.

Советсен штурмовой тата бомбардировочнăй авиацийĕ нимĕç çарĕсен колоннисене пыра-пыра çапнă. 4 бронетранспортер, 80 автомашина тата çарсемпе вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан 60 лава пĕтерсе тăкнă.

* * *

Санок хулинчен кăнтăртарахра тăшман хăйĕн пехотипе танкĕсен резервĕсене илсе пынă та хытă хирĕç тăрса çапăçать. Совет боецĕсем гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă. Нимĕçсен 1.066-мĕш пехотнăй полкне аркатса тăкнă. Тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. 16 тупă, 85 пулемет, шултăра калибрлă 3 миномет, винтовкăсем, автоматсем тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Санок хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçри подразделенисем Вельки Буковец ту хыçси патне пымалли çулсем çинче тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене чылайĕшне тытса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсем хăйсен çав позицийĕсене темиçе хутчен те каялла туртса илме хăтланнă, анчах та вĕсен атакисем пăчланса ларнă. Турка хулинчен кăнтăртарахра совет чаçĕсем 10 километр малалла кайнă. Завадка ятлă яла туртса илнĕ. Пирĕн стрелковăй подразделенисем ĕнер Ильник ялне туртса илнĕ чухне тăшман пехотин икĕ батальонне аркатса тăкнă, 9 тупă, 13 миномет тата 37 пулемет тытса илнĕ. 250 нимĕçпе венгера тыткăна илнĕ.

* * *

Остроленка хули районĕнче тăшман пехотин батальонĕ, артиллери персе хӳтĕлесе тăнипе, Нарев шывĕ урлă каçнă та çак шывăн сулахай хĕрринче плацдарм туртса илме хăтланнă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсене атакăланă та хаяр çапăçу хыççăн вĕсене Нарев шывĕн леш енне хăваласа янă. Шыв хĕрринче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. Темиçе вунă гитлеровец шыва путса вилнĕ. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сентябрĕн 26-мĕшĕпе 27-мĕшĕнче флот авиацийĕ Çурçĕр Норвегири Вадсе порчĕ çине бомбăсем пăрахнă. Хăй тĕллĕн çӳрекен 5 баржăпа 26 мотобота шыва путарнă. Пысăк боеприпас складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн карапĕсем тăшманăн тральщикне тата 4.000 тонна таякан транспортне атакăланă та шыва путарнă.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Комбинат коллективĕ 9 уйăхри плана срокчен тултарнă

СĔМЕРЛЕ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатра уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнакан цехсемпе участоксенчен [illegible] обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Димитриев юлташ начальникĕ пулса ĕçлекен цехри [illegible] Çапла, сентябрь уйăхĕн 20 кунĕнче плана стахановла Хусинов юлташ 325 процент, столяр Никитин юлташ 293 процент тултарнă. Вĕсем пек лайăх ĕçлекенсене хушăн цехрах чылай курма пулать.

Пĕр пек профессие ĕçлекенсем хушшинче ăмăрту малла сарăлса пырать. Çав ăмăртура [illegible] рабочисем А. Волков, Анисимов, Фомин тата ытти юлташсем [illegible] норма ытла тултараççĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртура пĕтĕм комбинат коллективĕ [illegible] 9 уйăхри плана срокчен тултарчĕ.

А. КАРТАШОВА.

Стахановецсен йышĕ ÿсет

СОВЕТСКОЕ. Апат-çимĕç комбинатĕнчи пур цехсен коллективĕсем те, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем илнĕ.

— Эпир çулталăкри плана срокчен тултаратпăр, — теççĕ рабочисем.

Пахча-çимĕç типĕтекен цехри З. Александрова, З. Андреева, А. Викторова тата ытти нумай юлташсем кашни кун нормăна 150-шар процент тултарса пыраççĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртура стахановла ĕçлекенсен йышĕ чылай ÿсрĕ.

Çулталăкри плана 150 процент ытла пурнăçланă

ЕЛЧĔК промкомбинатĕнчи атă-пушмак çĕлекен мастерской (заведующийĕ Сусметов юлташ) хăйĕн производство планне кашни кварталта чыслăн тултарать. Вăл пĕрремĕш кварталта плана 184 процент, иккĕмĕш кварталта 190 процент тултарнă. Виççĕмĕш кварталта вара мастерской плана 261 процент тултарнине вĕçлет. Çапла вăл хăйĕн çулталăкри плана 150 процент ытла тултарнă.

Халĕ мастерскойра ĕçлекенсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассипе ĕçлеççĕ.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

САД ПАХЧИСЕМ ЛАРТСА ТĂВАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕНСЕН КАНАШЛĂВĔ

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче Шупашкар хулинче [illegible] ĕçлекен агрономсен канашлăвĕ пулнă. Канашлура сад пахчисем чĕртсе хунавлантарас задачăсем çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Н. Г. Малов юлташ доклад туса пачĕ.

— Канаш, Çĕрпӳ, Сĕнтĕр тата ытти хăшпĕр районсенче сад пахчисене чĕртес тата çĕнĕрен лартас тĕлĕшпе аван ĕçлесçĕ, — тет Малов юлташ. — Кунта чылай колхозсем çĕнĕрен сад пахчисем лартнă, киввисене çĕнетнĕ. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнче 22 колхозра çĕнĕрен сад пахчи тунă. Çав колхозсенче пĕр çул хушшинче 70 гектар ытла çимĕç йывăççисем лартнă.

Анчах та Муркаш, Чурачăк, Етĕрне, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр районсенче сад пахчисем чĕртес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çав районсем сад пахчисем хунавлантармалли плана пурнăçламан. Çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсем вара, уйрăмах главнăй агрономсем, çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ.

Канашлура чылай агрономсем тухса каларĕç. Красноармейски районран — Алексеев, Шăхасан районĕнчен—Казанцева, Çĕрпӳ районĕнчен — Анисимов тата ытти юлташсем те районсенче сад пахчисем лартса тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен тата малалла мĕн тума шутлани çинчен каласа парĕç. Анчах та Хĕрлĕ Чутай райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен Шипколин юлташ хăйĕн сăмахĕнче колхозсенче сад пахчисене чĕртес ĕç мĕнле пыни тата çакăн пирки мĕн тума шутлани çинчен нимĕн те каламарĕ.

Канашлура пулнисем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç, кĕркунне йывăç лартса хăвармалли плана кашни колхозрах пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулчĕç.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пахча-çимĕç отделĕн начальникĕ Осанов юлташ хăйĕн сăмахĕнче государствăн тата колхозсен йывăç питомникĕсенчен çамрăк йывăççем сутма тытăнни çинчен тата çав йывăççем пăхнă плана лартса тултарма çителĕклĕ пуласси çинчен пĕлтерчĕ.

Тимлĕн ĕçлесе тунă çимĕçсем

ЕЛЧĔК. «Октябрь» колхоз чылай çулсем хушши ĕнтĕ пахча-çимĕçсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Кăçал вăл тĕрлĕ пахча-çимĕçсем 10 гектар акнă пулнă. Пахча-çимĕç бригади тăрăшса ĕçлени кăçал нумай çимĕç туса илме май пачĕ. Пĕтĕмпе 200 центнертан кая мар купăста, 350 центнертан кая мар кишĕр туса илнĕ. Ытти çимĕçсем те çавăн пекех тухăçлă пулнă.

Нумай колхозниксем пахча-çимĕç бригадинче 8—10-шар çул ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Акă, сăмахран, Степанида Носова пахчара 10 çул хушши ĕçлет. Пултаруллă ĕçленине кура, колхоз ăна виçĕм çул бригадира суйланă. Çавăн пекех бригадăра Е. Павлова, Н. Егорова, А. Баранова юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ.

— Тăрăшса ĕçлени нихăçан та харама каймасть, пирĕн пахча-çимĕçсем кăçал паттăр фронтовиксем валли те, колхозниксем валли те çителĕклех пулчĕç, — теççĕ бригадăри колхозницăсем. Халĕ бригадăра пахча-çимĕçсем пухса кĕртес ĕç пырать.

И. АЛЕКСЕЕВ.

Лаптев комбайнер пилĕк норма тултарнă

Алтайри çамрăк комбайнерсен ăмăртăвĕнче Ключевски МТС комбайнерĕ Андрей Лаптев мала тухнă. Вăл «Сталинец» комбайнпа 1173 гектар тырă вырса пухнă. Çапла вара вăл сезонри пилĕк нормăна тултарнă, 1.945 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. (ТАСС).

НТ 00716

Совет Союзĕ тăрăх

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ГЕРОЙĔСЕН ПАМЯТНИКĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

Пирĕн çĕршыври чи лайăх скульпторсем халь Отечественнăй вăрçă геройĕсен памятникĕсен проекчĕсене хатĕрлеççĕ. Çамрăк скульптор Е. Бучетич 5 çынтан тăракан памятникăн проектне хатĕрлесе çитернĕ. Вăл памятник Ефремов генерал-лейтенантпа унăн çывăх юлташĕсене кăтартать. Бучетич скульптор халь арми генералĕн Ватутинăн памятникĕн проектне хатĕрлет. Вăл памятника Киев хулинче лартмалла.

Правительство йышăннă тăрăх, Белгородра арми генералне Апанасенкăна памятник лартмалла. Çав памятникăн проектне Н. Томский скульптор хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ. ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Искусство комитечĕ Томскин тепĕр ĕçне — Совет Союзĕн Геройĕн Лиза Чайкинăн памятникĕн проектне йышăннă, ăна Калинин хули валли тунă.

Орел хулинче Гуртьев генерал-майора памятник лартаççĕ. Унăн проектне В. Гельфрейх архитектор хатĕрлет. Танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн Волохăн Изюм хулинче лартмалли памятникĕн проектне Г. Мотовилов скульптор хатĕрлет.

Искусство Комитечĕ чи лайăх мастерсене Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсен бронзăран тумалли 30 бюстне туса хатĕрлеме заказ панă. Çав скульптурăсене вара Геройсен тăван хулисенче е ялсенче лартаççĕ. (ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: Совхозсенчи хĕрарăмсен трактор бригадисен 1943 çулхи Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕнче мала тухнă М. И. Загорская. Унăн бригадине СССР Совхоз Халăх Комиссариачĕн пĕрремĕш премине тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

АЧА АМĂШĔСЕМПЕ АЧАСЕН ИНТЕРЕСĔСЕНЕ СЫХЛАС ЫЙТУПА ПУХНĂ ПĔТĔМ СОЮЗРИ КАНАШЛУ

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче Мускавра ача амăшĕсемпе ачасен интересĕсене сыхлас ыйтупа пухнă Пĕтĕм Союзри канашлу хăйĕн ĕçĕсене пĕтерчĕ. Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре ĕçлекен çынсем, промышленность наркомачĕсемпе предприятийĕсен тата профсоюзсемпе комсомол организацийĕсен представителĕсем СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхлас ĕçе мĕнле майпа тата ытларах лайăхлатмалли çинчен виçĕ кун хушши сӳтсе явнă. Сывлăха сыхлас ĕçсен Халăх Комиссарĕ Митерев юлташ ача çуратмалли çуртсене, ача консультацийĕсене тата ача яслийĕсене хуласенче те, ялсенче те йышлăлатасси çинчен пĕлтернине канашлу питĕ савăнса кĕтсе илнĕ.

Пренире тухса каланă çынсем ача амăшĕсемпе ачасен интересĕсене сыхлакан мĕнпур организацисен ĕçре пĕр-пĕринпе таччăнрах çыхăнса ĕçлеме кирлине кăтартса панă. Предприятисен хуçалăх енĕпе ĕçлекен руководителĕсем тата профсоюзсемпе общество организацийĕсем тумалли ĕççене вĕсем уйрăмах вăйлă палăртса панă. (ТАСС).

И. А. КРЫЛОВ ВИЛНĔРЕНПЕ 100 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМĔН

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн пур организацийĕсене те И. А. Крылов вилни 100 çул тултарнă май çамрăксене çав аслă баснописецăн пултарулăхĕпе паллаштарас ĕçе активлăн хутшăнма хушнă.

Художествăллă каçсенче çамрăксем Крыловăн баснисене вуласа параççĕ. Ремесло училищисемпе ФЗО шкулĕсенче И. А. Крыловăн пурнăçĕпе ĕçĕсене палăртакан литературăпа художество каçĕсем организацилеççĕ. Пионер отрячĕсенче, сывалмалли тата ача çурчĕсенче пионер костерĕсем туса ирттереççĕ.

Çамрăксем Крылов кĕнекисен выставкине тăвас ĕçе тата унăн произведенийĕсене сцена çинче чи лайăх вуласа, кăтартса памалли конкурссене хутшăнаççĕ.

Чылай облаçсемпе крайсене тата республикăсене И. А. Крылов ячĕпе тăракан пухусемпе каçсенче пулма писательсем, лекторсем тата артистсем тухса кайнă. Армян ССР-ĕнче писательница Мариэтта Шагинян, Тамбов облаçĕнче — Агния Барто, Украина ССР-ĕнче—Л. П. Гросман профессор лекцисем вуласа параççĕ. (ТАСС).

РЕМЕСЛО УЧИЛИЩИСЕМПЕ ФЗО ШКУЛĔСЕНЧЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕН ÇĔНĔРЕН УÇĂЛАКАН КУЛЬТУРА ÇУРЧĔСЕМ

Саратов, Ставрополь хулисĕнче тата ыттисенче те ремесло училищисемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен çĕнĕрен культура çурчĕсем уçăлнă. Вĕсене кирлĕ оборудование çав шкулсенче вĕренекен ачасем хăйсен вăйĕпе тунă. Çывăх вăхăтрах çавăн пек клубсем тата Ленинградра, Магнитогорскра, Астраханьре ĕçлеме пуçлаççĕ. Культура çурчĕсенче техника кабинечĕсем, художествăллă пултарулăх кружокĕсем тата вĕренекенсем тунă япаласен выставкисене организацилеççĕ. (ТАСС).

Вăрçă пыракан çулсем çинче

ÇАПАÇУРИ ÇАР, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕсем). Эпир хамăрăн танксем нумаях пулмасть кайнă çулпа пыратпăр. Пирĕн машина «ЗИС-сен», «Фордсен», «Студебеккерсен» вĕçĕ-хĕррисĕр колоннисенчен ирте-ирте каять. Вĕсем пехота, боеприпассем, горючи, снаряжени, тупăсем турттарса пыраççĕ. Пирĕн танксем нимĕç оборонине татнă та, çав вырăна пирĕн çарсем йышлăн кĕрсе кайнă; вĕсем пур çулсемпе те кăнтăр-хĕвеланăçнелле, Латви столици — Рига хули патнелле, вĕçĕ-хĕррисĕр каяççĕ.

Акă çул çинче персе çĕмĕрнĕ «Фердинанд» ларать, ун хыçĕнче — çунса кайнă «Опель». Çĕр çинче гитлеровецсен виçĕ офицерĕн виллисем выртаççĕ. Унтан леререх, вăрман хĕрринче — çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ нимĕç тупписем лараççĕ. Унта паян та çапăçнă. Вăрмантан виçĕ боец пĕр вăтăр нимĕçе илсе тухаççĕ. Çав нимĕçсем хирĕç тăма хăтланнă. Ун пеккисене пирĕн боецсем ращасенче, çулсем çинче тытаççĕ.

Пирĕн машина сылтăмалла пăрăнать. Тепĕр сехетрен эпир çыран хĕрринчи сăрт çине хăпарса каятпăр, Рига заливĕн кăвак шывĕ çине пăхатпăр...

Нимĕç оборонине лӳчĕркесе тăкса, Лимбажи хулине тата нимĕçсен ытти темиçе опорнăй пунктне тытса илсе, пĕр соединени боецĕсемпе офицерĕсем залив патнелле вăркăннă. Унта вĕсем çурçĕр енчен наступлени тăвакан танкистсене тĕл пулнă. Пехотинецсен пĕр пайĕ танксем çине ларнă та çав залив патне пуринчен малтан пырса тухнă.

Залив çыранĕ тăрăх кăнтăралла куçса пырса, пирĕн чаçсем Скултэ ялне тыгса илнĕ, сентябрĕн 27-мĕшĕнче вара Рига хулинчен 35 километрта çеç тăнă.

Цесис хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри участокра тăшман çаплах вăйлăн хирĕç тăрать.

Нимĕçсем пур çулсен узелĕсенче те, уйрăмах та Псковпа Рига хушшинчи шоссе тăрăх, инженерла чăрмавсем, надолбăсем, эскарпсем, мина хирĕсем нумай туса тултарнă. Çав хӳтлĕхсем хыçĕнче тăрса, гитлеровецсем артиллерипе минометсенчен, пулеметсемпе тата пăшалсемпе переççĕ, пирĕн çарсем умне вут-çулăм хӳми туса хураççĕ. Пирĕн чаçсем тăшманăн хирĕç тăракан ушкăнĕсенчен ирте-ирте каяççĕ, çав ушкăнсен вара ирĕксĕрех хăйсен техникине пăрахса каялла чакма лекет. Трофейсен хисепĕ Рига патнелле çывхарса пынăçемĕн кулленех ӳссе пырать.

П. БАРАННИКОВ.
А. БЕЙЛИН.

Манас çук эс ăна...

Пушă мар, çăмăл мар çав салтакăн хутаçĕ,
Пĕтĕм пурлăх пырать хăвпала яланах;
Сан çирен уртăнса вăл çӳрерĕ пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Похода кайнă чух, вăрăм çул утнă хыççăн
Паллă мар çырмаран шыв ĕçсе савăнан;
Шăрăхра, сивĕре йывăр тӳсрĕн пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Шăхăрса, ӳлесе çил вĕрет кассăн-кассăн,
Сан умна та çитет, вĕçтерет ыйхуна.
Кĕрхи каç окопра выртса куртăн пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Питĕ паллă, кĕске командирăн приказĕ:
Тухмалла çĕкленсе çĕмĕрме тăшмана.
Малтанхи çапăçу хăруш пулчĕ пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Ахăрса алхасать урнă йытă хаяррăн,
Пĕтересшĕн килсе сан тăван халăхна.
Ун тискер ĕçĕпе чуну ванчĕ пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Çавăнпа çапăçу хирĕнчен те тухмастăн,
Паян кун та хĕрсе, паттăрла çапăçан.
Сахал мар нимĕçсен пуçне татрăн пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Çитес кун çитетех: пирĕн халăх хавассăн
Çĕнтерӳ уявне уявлать, савăнать.
Эс ăна манас çук пуçу сывă пулсассăн, —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна!

Çĕмĕрен çĕкленсе хĕвел хăвăрт тухсассăн,
Çĕр суранĕ иртет, ерипен юсанать.
Вăл сана ӳстерсе хăват пачĕ пулсассăн,
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна!

Иван МАЛГАЙ.

Çĕнтерӳ кунĕ çывăхарса килнĕ чух...

Советски район фронтран темиçе пин çухрăм инçетре выртать. Фронтран ăна анлă уйхирсем, вăрмансемпе юханшывсем, сăрт-тусем уйăрса тăраççĕ. Анчах боецсемпе офицерсем тăван çĕршĕн юнĕсене хĕрхенмесĕр çапăçни, тăван аннемĕре — çĕршыва чунтан юратни тылри çынсен шухăш-кăмăлĕсене фронтпа тăванлатать.

Çывăх боецăмăр! Эпир яланах санпа. Алла хаçат е çыру тытса вулатпăр-и, репродуктор умĕнче тăратпăр-и, — яланах эпир санпа пĕрле. Акă вăрман ĕçлетпĕр, ака-суха тăватпăр, торф кăларатпăр... Эсĕ асран каймастăн. Эсĕ пирĕн умма телейлĕ пурнăçăн шăнине татса паракан пек тухса тăратăн.

Боецăмăр! Эсĕ Çара кайиччен кĕтӳ кĕтнĕ-и, хурçă шăратнă-и, учитель-и, агроном-и, — пурте чысра.

Якаткассисем кашни кун çĕршер çыру илеççĕ. Ĕнер те çыру килчĕ,—ку çыру колхозник пулнă Георгий Волковран. Вăл отделени командирĕ, связист. Вăл тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçа кĕртни çинчен çырать. Нимĕçсен хура юнĕпе юхнă Днепр урлă каçнă вăл. Чаплă воин пулса, 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденне илнĕ. Вăл ытлашши нимĕнех те çырман, тăшманпа юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма пулнине çеç пĕлтернĕ.

Çав ял каччисемпе хĕрĕсем çуллахи урама янăрататчĕç. Вĕсемпе пĕрле Саша Иванов та савăнатчĕ. Анчах вăрçă ăна фронта кайма хушрĕ. Малти позицисенче —Белоруссири шурлăхсемпе лачакасенче— çапăçнă вăл. Воинăн чĕри ывăнман, икĕ çирĕп алли автомата çирĕппĕн пăчăртанă. Вăл нумай нимĕçе вĕлернĕ. Унпа ĕлĕк савăннă хĕр-тусĕсем, колхоз уйхирĕсемпе фермăсенче, вăрмансенче ĕçлекенскерсем, ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăлани çинчен пĕлчĕç.

Пĕррехинче Мăн Ямашри «Заря» колхоз членне, 65 çултан иртнĕ Васса Архиповăна письмоносец çыру пачĕ. Тăваткăл çыру, шурă конвертлăскер. Кам çырнă-ши? Мĕн тунă унăн пĕртен-пĕр савнă ывăлĕ? Çук, ывăлĕ мар. Ку çырăва ывăлĕ пурăннă чаçри комсомол организацийĕн секретарĕ çырнă. «Сирĕн ывăлăр Василий Лермонтов ирĕклĕхшĕн пынă çапăçу хирĕнче мухтава тухрĕ... Ăна правительство «За отвагу» медальпе наградăларĕ», — тесе пĕлтернĕ çырура. Амăшĕ куинашкал нихăçан та савăнман пулĕ. Тăван çĕршыва юратаканăн чĕри, ывăлĕшĕн çунаканскер, тулли-тулли кăмăлпа тапрĕ.

Вăрçă пире йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентрĕ. Пирĕн нимрен хакли — Тăван çĕршыв пур. Унăн лăпкăлăхĕнче, ачашлăхĕнче ӳснĕ ывăлсем хурçăран та çирĕп этемсем пулчĕç. Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерне А. Емельянова (Лапракасси), Отечественнăй вăрçă орденĕн кавалерне Г. Спиридонова (Çухра), ытти воинсене хисепленĕ пекех, колхоз ялĕн çыннисем çав тери хисеплеççĕ.

Пирĕн юрату çав тери пысăк. Анчах курайманлăх та пысăк. Эпир Тăван çĕршыва чун-чĕререн юрататпăр. Пирĕн çĕре юнлă аттисемпе таптама, тăван чĕлхене мантарса йытăлла вĕрмелли нимĕç чĕлхипе каластарма килнĕ çынçиенсене хаяррăн тарăхса кураймастпăр. Тарăху тавăрма хушать, эпир тавăратпăр та.

Ман пата фронта кайиччен тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен рядовой колхозник пулнă Иван Бондарев (Вăрманкас Асламас) çыру çырчĕ. Вăл ăна йывăр çапăçусенче пулса суранланнă хыççăн, госпитальрен çырнă. «Ых, вăл нимĕç — ирсĕр ят... Мĕн тери вĕсем этем виçинчен тухса кайнă. Хам куçпа нимĕç вĕлернĕ ача-пăчасене, çунтарнă çуртйĕрсене мĕн чухлĕ курнине калама та пултараймастăп. Вĕсен аллинчен нумай тискерлĕх тухнă... Каллех вăрçма каятăп».—тесе çырать вăл.

Нимĕçе эпир ылханатпăр. Боец юлташăм! Тавăру сехечĕ çитрĕ. Нимĕç вилес кунĕ çитнĕ йытă пек чĕтрет. Вăл пуçне çăласшăн. Анчах ăна урăх пуçне çĕклеме памалла мар. Ăна лӳчĕркемелле. Ăна приклалпа çапмалла, штыкпа чикмелле, пульăпа вĕлермелле..

«Эпĕ пĕр çапăçура икĕ минута хушшинче 3 нимĕçе штыкпа чиксе вĕлертĕм. Тепĕр землянка умĕнче граната ывăтса татах иккĕшне тирпейлерĕм», — тесе çырать Бондарев юлташ. Укăн хăюллă ĕçĕсене боецсем фронтри «Красные богатыри» хаçатра çеç мар, чăн-чăнах хăйсен куçĕсемпе курнă.

Паллах, эпĕ пĕтĕмпе миçе нимĕçе вĕлернине шута илмен, — тесе çырать вăл. —Çапах та нумай вĕлернĕ. Эпĕ купна лăпланмастăп... Çавăн пек калать хĕрлĕ воинăн чĕри. Çавăн пек çырать «За отвагу» медаль илнĕ Иван Корнилов, çавăн пек çырать Сталинграда хӳтĕленĕшĕн «За оборону Сталинграда» медальпе «За боевые заслуги» медаль илнĕ Т. Емельянов.

Вĕсем час-часах мирлĕ пурнăçа аса илеççĕ. Трактор рульне тытса колхоз çĕрне сухаланă çын халĕ хурçă танкпа наступление каять. Çурла-çава пулнă алăра халĕ автомат. Вăрçă профессие вăхăтлăха улăштарчĕ çеç мар, вăл пире нумай пĕлекен турĕ. «Тачка пĕлĕтсем хушшипе вĕçнĕ чух мана колхоз хирĕнче ларса пынăн туйăнать, — тесе çырать икĕ орден илнĕ летчик-истребитель Никифор Игнатьев.—Епле хаклă маншăн тăван хир. Епле хаклă йăмраллă ялăм. Эпĕ унта ӳснĕ, унтан вĕренме кайнă. Мĕн тери хаклă тăван çĕршывăм». Вăл Полярти пăрсем хушшинче инçетри чăваш çĕрĕнчи Хурамалăх ялне, пирĕн чыслăха хӳтĕлет.

Фронт Советскинчен инçетрен инçетерех кайса пырать. Пирĕн земляксен те пĕр çул çеç — хĕвеланăçнелле. Унта хĕнхурлă пурнăçра асапланакан тăвансене ирĕке кăларма каймалла. Çутă хĕвел çуттине ĕмĕрлĕхех тупса памалла. Вара вĕсем каллех телейлĕ саманан ырă сывлăшне пĕлсе илĕç. Савăк пулĕ пурăнма. Анчах халĕ вăрçмалла.

... Вăрçă пĕтĕ. Эпир тар тĕтĕмĕпе, вăрçă вучĕпе пиçĕхнĕ юлташсене, тăвансене тĕл пулăпăр. Çĕнтерӳ праçникне уявлăпăр. Тупă сассисем кĕмсĕртетĕç — вăл татăклă çĕнтерӳ салючĕ пулĕ.

Советски районри çынсем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, çав куна кĕтеççĕ. Чĕререн кĕтетпĕр çĕнтерӳ кунне. Эпир, Советски районри колхозниксем, тылри пысăк ӳсĕмсемпе, орденсем тата медальсем илнĕ 250 боецпа, офицерсемпе, Совет Союзĕн икĕ Геройĕпе—Федот Орловпа тата Борис Васильевпа мухтанма пултаратпăр. Эпир вĕсем патне кăмăллă çырусем, парнесем ярса паратпăр, пĕр госпитальри боецсене шефа илтĕмĕр...

Çĕнтерӳ çывхарать. Тавăру сехечĕ çиттĕр тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

Яков СИГАЙ.

СОВЕТСКОЕ.

Югославири лару-тăру

Темиçе кун каярах Совет командованийĕ, Германипе Венгрин Венгрири çарĕсене хирĕç вăрçас ĕçе вăйлатса ярас тесе, Югослави халăхĕн ирĕклĕх комитетĕнчен тата Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн командованийĕнчен совет çарĕсене Югославин Венгрипе юнашар выртакан территорине вăхăтлăха кĕрсе кайма ирĕк пама ыйтнă. Совет командованийĕ çапла каланă: совет çарĕсем хăйсен çавăнти вăрçă ĕçĕсене пĕтернĕ хыççăнах Югославирен тухса каяççĕ, тенĕ.

Югослави халăхĕн ирĕклĕх комитечĕпе верховнăй командованийĕ Совет командованийĕ ыйтнипе килĕшнĕ. Югослави енчен çакăн пек услови лартнă: Югослави территорийĕнче Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăракан районсенче Югослави халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн граждăнла администрацийĕ ĕçлесе тăмалла, тенĕ. Совет командованийĕ çак условипе килĕшнĕ. (ТАСС).

Европăри консультаци комиссийĕн ĕçĕсем çинчен

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Лондонра политика тĕлĕшпе ĕçлекен çынсем хушшинче те, çавăн пекех тата хаçат-журналсенче те Европăри консультаци комиссийĕн ĕçĕсем çинчен нумай çырнă, нумай калаçнă, халĕ те нумай çыраççĕ тата нумай калаçаççĕ. Çав комиссие Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Англин представителĕсем кĕреççĕ—В. Т. Гусев, Д. Г. Вайнант тата Вильям Стронг. Вăл комисси хупă ларусем туса ирттерет. Анчах та час-часах çапла пулса тăрать: комисси ĕçĕсем çинчен калакан материалсем официальнăй çынсен аллине лексенех çав ĕçсем çинчен часах журналистсем те, Лондонри общество деятелĕсем те пĕлеççĕ. Çапла калаççĕ: Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарас тата гитлерла йыткĕтĕвĕсем поражени тӳснĕ хыççăн (вĕсем поражени тӳсеççех ĕнтĕ) Германире мĕнле йĕрке тăвас ыйтупа çыхăнса тăракан тĕп документсене çырса хатĕрлес тĕлĕшпе Европăри консультаци комиссийĕ пысăк утăмах тунă, теççĕ. Хаçатсенчен пĕри—«Санди Таймс» — Германире союзниксен верховнăй контроль органĕ пуçĕнче тăмалли представительсен ячĕсене те калать.

Комисси ĕçĕсен результачĕсем мĕнле-ха? Европăри консультаци комиссийĕн задачи, ăна пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ — Европăра вăрçă ĕçĕсене пĕтерсе лартассипе, пуринчен те маларах—Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарасси çинчен калакан тĕп документсене çырса хатĕрлессипе çыхăнса тăракан ыйтусене тĕпчесе пĕлесси пулать. Ахаль журналистсем те пĕлекен мĕнпур хыпарсене тата хаçат-журналсенче çырнине тĕплĕн пăхса тухса тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн çакăн пек выводсем тума пулать.

Европăри консультаци комиссийĕ тĕп документа — Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарасси çинчен калакан документа хатĕрлесе çирĕплетнĕ ĕнтĕ. Çав документра гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçă Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарнипе вĕçленмелли çинчен каланă. Унта çапла каланă: Германи пĕр сăмахсăрах парăнасси Германи правительствипе главнокомандованийĕ Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем çĕр çинче те, тинĕсре те, сывлăшра та пуçĕпех поражени тӳснине йышăннă хыççăн пулмалла тенĕ. Çакна пула вара, гитлеровецсемпе вĕсен агентурин çапла каласа усаллăн агитацилеме май пулмасть: Германи парăнни Германие вăрçăра аркатса тăкнинчен мар, политикăллă конъюнктурăран килчĕ, тесе калама май пулмасть. (пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн вĕсем çавăн пек каласа агитацилеччĕ).

Союзлă державăсен представителĕсем вăрçă ĕçĕсене пĕтерсе лартассин йĕркипе техникăлла условийĕсем çинчен, Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене, флотне тата авиацине хĕçпăшалсăрлантармалли йĕрке çинчен тата çар пурлăхне союзниксен аллине памалли çинчен çеç каласса татăлман, вĕсем тата мир туса ăна сыхласа хăварма Германие демилитаризацилемелли çинчен те калаçса татăлнă. Çынсем каланă тăрăх, çав документ вăл пуринчен ытла вăрçă çинчен калакан темиçе статьяран çеç тăрать, çав статьясенче Германие парăнтармалли тĕп ыйтусем çинчен каланă. Анчах та çав статьясем хушшинче çакăн пек статья пур: çав документа алă пуснă хыççăн союзниксем Германи умне политика, çар тата экономика тĕлĕшпе кирек мĕнле ытти требованисем те лартма пултараççĕ, тенĕ вăл статьяра.

Тата çакăн пек хыпарсем пур: Европăри консультаци комиссийĕ Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарасси çинчен калакан тĕп документсенчен тепĕр документне — Германие оккупацилемелли йĕрке çинчен калаканнине — пăхса тухса çирĕплетнĕ. Çав документра çапла каланă: Германие виçĕ державăн — Совет Союзĕн, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕсем оккупацилеççĕ, çав çĕршывсен правительствисем вара союзниксен требованийĕсене Германи мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăраççĕ. Европăри консультаци комиссийĕ хатĕрлесе хунă проект тăрăх, Германие оккупацилес тĕлĕшпе виçĕ пая уйăраççĕ: Германин хĕвелтухăç енчи пайне (çав шута Хĕвелтухăç Прусси те кĕрет) Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем оккупацилеççĕ. Берлин Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем оккупацилемелли пая кĕрет, анчах та, калаçса татăлнă тăрăх, ăна та виçĕ пая уйăрса, виçĕ державăн çарĕсем оккупацилеççĕ. Германин ытти территорине оккупацилес тĕлĕшпе икĕ пая уйăраççĕ: пĕри—çурçĕр-хĕвеланăç пайĕ, тепри—кăнтăр-хĕвеланăç пайĕ пулать; вĕсенчен пĕрне Британи çарĕсем, тепĕрне—Америка çарĕсем оккупацилеççĕ.

Хальхи вăхăтра, çынсем каланă тăрăх, Европăри консультаци комиссийĕ союзниксен Германири контроль аппарачĕ çинчен калакан документа çырса хатĕрлет. Çав документра çапла каланă: Германи парăннă хыççăн Германире чи аслă власть союзниксен виçĕ главнокомандующийĕн аллинче пулать, çав главнокомандующисем пĕрле союзниксен контроль совечĕ пулса тăраççĕ. Контроль совечĕн решенийĕсене пурнăçламашкăн ун умĕнче хăйне уйрăм аппарат тăваççĕ. Çапла шутлаççĕ: практика енчен илсен, оккупацилемелли кашни пайра пĕтĕм власть çав пая оккупациленĕ çарсен главнокомандующийĕн аллинче пулать. Берлинра çеç ĕç урăхларах пулать. Берлина виçĕ державăн — Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Англин çарĕсем пĕрле оккупацилемелле тунă пирки, унта союзниксен пĕрлехи комендатури пулать. Çав комендатурăн структурине палăртса хуман курăнать-ха.

Англипе Америка хаçачĕсенче час-часах Германие вакласа, пĕр-пĕрне пăхăнса тăман темиçе пĕчĕк государство туса хума май пурри çинчен çыраççĕ. Анчах та Европăри консультаци комиссийĕнче ун пек проектсене пăхса тухман курăнать, пăхса тухмаççĕ те. Кунта тата çапла хушса калама пулать: Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаментĕнче те, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче те çав проектсем майлă тăракан çынсем те, вĕсене хирĕç пыраканнисем те пур, теççĕ.

Тата çапла калама пулать: Европăри консультаци комиссийĕ Австри тĕлĕшпе решенисем йышăнман-ха.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 28-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Недер, Рейн шывĕнчен çурçĕртерехри районра союзниксен çарĕсене каялла илсе тухнă. Неймеген хулинчен çурçĕртерехри районра ĕнер кунĕпех çапăçнă, унта союзниксен çарĕсем çурçĕр-хĕвелтухăçнелле малалла куçнă, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Савăлланса кĕнĕ районран хĕвеланăçнерехре, союзниксем Осс хулинчен кăнтăралла малалла куçнă.

Сывлăшра пулса иртнĕ йышлă çапăçусенче тăшманăн 41 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 10 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Аахен хулинчен çурçĕртерехре Люневиль хули еннелле нимĕçсен те, союзниксен те патрулĕсем хытă кĕрешнĕ. Штольберг хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Херттен патĕнчи тĕреклетнĕ пунктсенче çирĕпленсе ларнă нимĕçсем союзниксен чаçĕсене хытă хирĕç тăраççĕ.

Кале хули районĕнче союзниксен çарĕсем çав хула патĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешеççĕ, шыв илнĕ вырăн урлă хĕвеланăçнелле кайма çул хываççĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 28-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Итали фрончĕн вăтаçĕрти секторĕнче 5-мĕш армин Америкăпа Англи чаçĕсем хытă хирĕç тăракан тăшмана вăйлăн хĕссе пынă. Вĕсем хăшпĕр пунктра икĕ миля малалла кайнă, паха позицисем туртса илнĕ. Адриатика тинĕсĕ хĕрринче союзниксен çарĕсем 10 миля сарлакĕш ытла фронтпа Рубикон шывĕ урлă каçнă, тăшмана тапăнма тунă укрепление 2 миля ытла аслăлатнă. Союзниксен çарĕсем Беллариа хулине туртса илнĕ. Çав вăхăтрах 8-мĕш армин ытти соединенийĕсем Савиньяно хулине çавăрса илнĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 550 вĕçев тунă.

БОНОМИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ДЕКЛАРАЦИЙĔ

РИМ, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Министрсен совечĕ деклараци пичетлесе кăларнă. Декларацире Италин чăннипех вăйлă правительстви пулма тивĕçлине кăтартса панă. Вара çав правительствăн тĕнче умĕнче халăх чысне тата унăн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе тăмалăх власть пулмалла, ăна союзлă халăхсем хисеплесе тăмалла пултăр. Министрсен совечĕ çакна палăртнă: çавăн пек пултăр тесен, ултă партин хальхи пĕрлĕхне тата вăйлăрах çирĕплетмелле. Ултă парти пĕрлешĕвĕн тĕллевĕсем çаксем пулса тăраççĕ: нимĕç захватчикĕсемпе вĕсен фашистла тусĕсене хирĕç пыракан вăрçа вăйлатасси, наказанисем парса тата фашистла чирчĕртен хаяррăн тасатса, наци организмĕнчи преступленисене пĕтересси, хăйсен тĕп шухăшĕ енĕпе тата учрежденийĕсем тĕлĕшпе те демократиллĕ государство тăвасси. Министрсен совечĕ çакăн пек ĕçлеме кирлĕ тесе шутлать: çак аслă задачăна пурнăça кĕртес тесе, ултă партин пĕр-пĕринпе хытă килĕштерсе ĕçлемелле, çак аслă задачăна пурнăçлас ĕçе çав ултă партин хăйсен мĕнпур вăйне памалла, çĕнĕ правительство тавра çав партисен членĕсене кăна мар, халăхăн пĕтĕм пултаруллă вăйĕсене те пĕрлештермелле.

ФРАНЦИН СУТУ-ИЛӲ ФЛОТНЕ ФРАНЦИ ВЛАÇНЕ ТАВĂРСА ПАНИ

ПАРИЖ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Çулйĕр ĕçĕсен министерствин руководителĕ Ренэ Мейер каласа панă тăрăх, Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăхăтлăха усă курса тăнă Франци суднисене пурне те хальхи вăхăтра Франци влаçне каялла тавăрса панă. Ренэ Мейер унтан çапла каланă: хальхи вăхăтра французсен суту-илӳ флочĕ хăйĕн вăрçăчченхи шучĕн виçсĕмĕш пайĕ чухлĕ кăна тăрса юлнă, тенĕ.

А. ХАКСЕЛЬ ГОСПОДИН МУСКАВРАН ТУХСА КАЙНĂ

Сывлăхĕ самаях юсаннине пула, А. Хаксель господин хăйĕн арăмĕпе тата хăйне сыватакан финн врачĕпе пĕрле сентябрĕн 28-мĕшĕнче Мускавран Хельсинки хулине самолетпа вĕçсе кайнă, вара çав кунах Хельсинки хулине çитнĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

сентябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа
кунсеренех
«БОЛЬШАЯ ЗЕМЛЯ»
ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Машинкăпа пичетлеме вĕренмелли курса вĕренме илеççĕ. Унта вăтам шкултан тата туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Вĕрентме кăçалхи октябрь уйăхĕн 10-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Новая ул., дом № 22, Женская школа № 22. Дирекции курсов машинописи.

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Ишлей разъездĕнче кӳлнĕ лаша урапи-мĕнĕпех çухалнă. Лашин паллисем çапла: тĕсĕ—турă, кайри сулахай ури—шурă, çамки çинче шурă пур.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Ишлейский район, дер. Кжауши, Правлению колхоза имени Карла Маркса.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.